28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945
МАЙ
19
ШАМАТКУН
95(6846) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çурхи ака ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлер!

Кăçал çураки ĕçĕсем республикăра пĕлтĕрхинчен чылай хăвăртрах пулса пыраççĕ. Ку вăл çапах та кăçал пирĕн ĕçре йывăрлăхсем сахалланнине пĕлтермест. Йывăрлăхсем вĕсем кăçал нумайрах та-п тен. Анчах та татăклă çĕнтерӳ хыпарĕсем, Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕсем пирĕн колхозниксене çĕнĕ вăй хушса пачĕç, вĕсен активлăхне, хастарлăхне, ĕçлес кăмăлне çĕклерĕç. Майăн 15-мĕшĕ тĕлне республика çураки планне пĕтĕмпе 71 процент пурнăçа кĕртрĕ. малта пыракан чылай районсем тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтерчĕç те ĕнтĕ.

Çапах та çураки ĕçĕсем тивĕçлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пыраççĕ тесе калама çук-ха. Лăпланса ларма вăхăт мар. Çурхи кунсем кăçал уяр та сивĕ тăраççĕ. Тăпра хăвăрт типсе пырать. Çавăнпа кам хăвăртрах та тĕплĕнрех акса хăварать, вăл кăçал вăйлăрах тырпул туса илет. Ку вăл—пуриншĕн те питĕ паллă чăнлăх. Анчах паллă чăнлăхсем çинчен те нумай юлташсене татах аса илтерме тивет-ха. Ака вăхăчĕ иртсе пырать, кĕçех тырпул акма кая пулать. Апла пулин те республикăра васкамасăр акакан районсемпе колхозсем халĕ чылай. Кувакино, Первомайски, Пăрачкав, Улатăр, Çĕмĕрле, Йĕпреç районĕсем ку тарана çитсе те çурхи тырăсене çуррине кăна акнă.

Çуракине вăраха яракан колхозсемпе районсен руководителĕсем хăйсем юлса пынине ăнлантарса пама яланах тĕрлĕ сăлтавсем шыраççĕ. «Лаша çителĕксĕр, ĕç вăйĕ çителĕксĕр» теписене уйрăмах час. часах илтме пулать. Çапла каласа, юлса пыракан колхозсемпе районсен хăшпĕр руководителĕсем таçтан аякран пулăшу килессе хытă кĕтеççĕ. Кувакино районнех илме пулать. Ку район иртнĕ çулсенче те чи юлашки вырăна никама та памарĕ. Çавăнпа ăна пулăшас енĕпе республикăри организацисем сахал мар тăрăшрĕç: районра икĕ МТС организациленĕ, вĕсенче çĕр трактора яхăн ĕçлет. МТС-сем валли горючи тата сĕрмелли япаласем çителĕклĕ таранах панă; районри колхозсене вăрлăхлăх тырă чылай парса пулăшнă, чĕрĕ туртăм вăйĕ парса тата ытти майсемпе те сахал мар пулăшнă. Район пурпĕрех кăçал та юлса пырать. Мĕн çитмест-ха, тата мĕнле майпа пулăшмалла вара Кувакино районне? Паллах, район ăна пулăшманран мар, урăх сăлтавсене пула юлса пырать. Колхозри ĕçе организацилеме пĕлменни, колхозниксене пурне те ĕçе мобилизациленменни, тракторсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелеменни, ĕç дисциплинине çирĕплетменни,—çаксем район юлса пынин тĕп сăлтавĕсем пулаççĕ.

Сăмахран, юлса пыракан колхозсенче час-часах туртăм вăйĕ çитмест тесе ӳпкелешеççĕ. Çав вăхăтрах çав колхозрах лашасемпе туллин тата тĕрĕс усă курмаççĕ, колхозăн хĕсĕр ĕнисемпе вăкăрĕсене тата колхозниксен ĕнисене кӳлсе ĕçлеме вĕрентсе усă курмаççĕ, ут таврашĕсене çителĕклĕ чухлех хатĕрлесе хумаççĕ, вĕсемпе тирпейлĕн усă курма тăрăшмаççĕ. Е илер ĕç вăйĕ пирки тăракан ыйтăва. Ĕç вăйĕ ытлашшипех пур тесе халĕ нихăш колхоз та мухтанма пултараймасть. Анчах ĕçе организацилеме пĕлсен, пур пек ĕç вăйĕпе те колхозри уйхир ĕçĕсене вăхăтра туса пыма пулать. Юлса пыракан колхозсенче вара колхозниксене тĕрĕс вырнаçтарса тухас ыйтăва хакламаççĕ, уйрăм сдельщинăпа мар, ушкăнпа ĕçлеççĕ. Ĕç вăйĕ çитмен вăхăтрах хăшпĕр колхозниксем колхоз ĕçне хутшăнмаççĕ, чылайĕшĕ ĕçе кая юлса тухаççĕ, ĕçрен вара питĕ ир кĕреççĕ, 4—5 сехет хушши кăнтăрлахи апат çиеççĕ, ĕç дисциплинине пăхăнмаççĕ. Вăл колхозсен председателĕсемпе бригадирĕсем ялан хирте пулас вырăнне колхоз канцелярийĕнче шăвласа лараççĕ, е хăш чухне тата ӳсĕр те çӳреççĕ. Ăнланмалла ĕнтĕ, çакăн пек колхоз çуракине ăнăçлăн иртterme пултараймасть, апла пулсан, вăл кĕркунне тырпул сахал пухса илет, çавна пула килес çул та юлса пыма пултарать.

Колхоз председателĕсемпе ялти ытти работниксем хушшинче хальхи вăхăта тĕрĕс мар хаклакан юлташсем те тĕл пулаççĕ. «Вăрçă пĕтрĕ, халĕ ĕнтĕ ытлашши васкамасан та, ĕçе кăштах сӳрĕклетсен те юрать пулĕ», тесе шутлаççĕ çав юлташсем. Çапла шутлани пысăк йăнăш тупи пулĕччĕ. Пачах урăхла, вăрçă юхăнтарса хăварнă хуçалăха ура çине тăратас, нимĕç вăрă-хурахĕсем аркатнă çуртйĕрсемпе çулйĕрсене тата ыттисене те юсаса ĕçе ярас, вăрçă хыççăн хамăр çĕршыва татах та хăватлăрах пулмалла тăвас тесе, пирĕн халĕ вăя чакарса мар, татах та ытларах ӳстерсе ĕçлемелле. Çакăн пек пирĕн патриотла тивĕç.

Колхозпа колхозниксен пурнăçĕ йăлтах тырпул тухăçлăхĕнчен килет. Тырра вăхăтра тата лайăх акса хăварсан кăна вăл вăйлă пулма, колхозниксен пурнăçĕ лайăх пулма пултарать. Апла пулсан, тырпула вăхăтра кăна мар, тата лайăх акса хăвармалла. Çак тĕлĕшпе вара агротехника правилисене пăхăнни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах вăл правилăсене пăснине кăтартакан тĕслĕхсене чылай колхозсенче курма пулать-ха. Сӳлте асăннă Кувакино, Йĕпреç тата ытти районсенче çĕре 10—12 сантиметр тарăнĕш кăна сухаланине, вăрлăха начар витĕнтерсе хăварнине сахал мар колхозсенче палăртнă. Кун пирки вĕсене ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ те çирĕппĕн асăрхаттарнă. Агрономи наукин кăтартăвĕсене тĕплĕн пурнăçа кĕртесси—çуракин çирĕп законĕ пулса тăмалла.

Хамăр хаçатăн иртнĕ номерĕсенче эпир ВКП(б) Обкомĕ тракторсемпе тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе уйхир ĕçĕсенче усă курассине лайăхлатмалли мерăсем çинчен йышăннă постановленисене пичетлесе кăлартăмăр. Çав постановленисене тĕплĕн те тĕрĕс пурнăçа кĕртни çураки ĕçĕсене хăвăртлатма, колхозсемпе МТС-сен хуçалăхне çирĕплетме пулăшмалла.

Малта пыракан районсемпе колхозсем, тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене акса пĕтерсе, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартмашкăн çĕр хатĕрлеме тытăнчĕç, фермасем çумĕнчи участоксенче тĕрлĕ çимĕçсем лартас ĕçе пуçăнчĕç. Вăрнар районĕнчи колхозсем 255 гектар, Советски районра 463 гектар, Сĕнтĕр районĕнче 163 гектар, Çĕрпӳ районĕнче 142 гектар çĕрулми лартнă та ĕнтĕ. Анчах чылай районсенче халĕ çĕрулми лартма тытăнман-ха, вĕсем «меллĕрех» вăхăта кĕтеççĕ пулас. Çакна ĕнтĕ тĕрĕс теме çук. Кĕтмелли вăхăтсем тахçанах хыçа тăрса юлчĕç, халĕ акмалли тата лартмалли вăхăтсем килсе çитрĕç. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартас ĕçе халĕ чăнласах тата тимлĕн туса пыма тытăнмалла.

Партипе совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен, колхоз председателĕсемпе бригадирĕсен, халиччен пулнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, çураки ĕçĕсене çывăх вăхăтрах вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешес пулать.

Ялти агитациллĕ-массăллă ĕç халĕ çурхи уйхир ĕçĕсен хăвăртлăхне ӳстерес, колхозниксемпе колхозницăсене хамăрăн çĕршывăн историллĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса парса, колхоз производствинче татах та хĕрӳллĕнрех ĕçлеме явăçтарас, вĕсен социализмлă ăмăртăвне вăйлатас енĕпе пулса пымалла.

Сталин юлташ тухса каланисене граммофон пластинкисем çине çырса хунă

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство комитечĕн Сасă çыракан çурчĕ Сталин юлташ тухса каланисене граммофон пластинкисем çине çырса хунă. Пĕрин çине Сталин юлташ Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕсене 1945 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче Совет Союзĕн çарĕсемпе Англипе Америка çарĕсем Германи территорийĕнче пĕрпĕрипе пĕрлешнĕ пирки чĕнсе каланине çырнă, теприн çине—1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Çĕнтерӳ кунĕнче халăха чĕнсе каланине çырнă. Хăй вăхăтĕнче Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада çырнă ытти 7 пластинкăпа пĕрле çак халĕ çырнă икĕ пластинка ятарласа хатĕрленĕ альбом пулса тăраççĕ. Вăл альбома Искусство комитечĕ хатĕрлесе кăларать.

Халĕ заводра граммофон пластинкисен пĕрремĕш партине хатĕрлеççĕ. Альбом пĕтĕмпе 5 пин экземпляр тухмалла. (ТАСС).

Çĕнтерӳ юрри çырмалли конкурс пуçланнă

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство Комитечĕ, Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕ, композиторсен тата писательсен союзĕсемпе пĕрле, Çĕнтерӳ çинчен чи лайăх юрă çырма конкурс пуçланă. Конкурсра темиçе преми пама йышăннă. Конкурс жюривĕ паллă композиторсем, артистсем, писательсем—Шапорин, Захаров, Максакова, Маршак, Антокольский, Свешников, Белый тата ыттисем те кĕнĕ.

Конкурса халĕ 70 юрра яхăн тăратнă. Авторсем хушшинче—Дунаевский, Новиков, Мокроусов композиторсем, Асеев, Сурков, Долматовский, Жаров поэтсем пур. Юрăсене пĕччен юрлама тата ансамбльсемпе хорсем валли çырнă. (ТАСС).

Граждансем валли пусма тавар

Трехгорнăй мануфактурăн Дзержински ячĕпе тăракан фабрики граждансем валли пусма тавар—ситпă, сатин, фланель, молескин тата ытти йышши пусмасем те—туса кăларма пуçлать.

Художество мастерскойĕ çав пусмасем валли 40 тĕрлĕ ытла тĕрĕсем хатĕрлесе хунă. Вĕсенчен вăтăрăшне художество совечĕ ырланă ĕнтĕ. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш республикинчи суту-илӳпе хатĕрлев организацийĕсенчи, обществăллă апатлану системинчи, предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенчи рабочисене, служащисене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 82-мĕш, 91-мĕш тата 94-мĕш номерĕсенче).

44. Михаил Сергеевич Лунина—Торгплодоовощĕн Куславккари кантурĕн управляющине.
45. Алексей Андреевич Лушина—Канашри вăрманпромхоз ОРС-ĕн пекарьне.
46. Алексей Николаевич Малышева—КОГИЗ-ăн Шупашкарти магазинĕн отделени заведующине.
47. Михаил Васильевич Мансурова—Комсомольски райпотребсоюзăн суту-илӳ отделĕн заведующине.
48. Клавдия Ефимовна Меламеда—Шупашкарти столовăйсен тресчĕн 4-мĕш номерлĕ столовăйĕн заведующине.
49. Анфиса Михайловна Михайловăна—Чăвашторгăн Шупашкарти отделенийĕн подсобнăй хуçалăхĕнчи пахча-çимĕç бригадирне.
50. Павел Михайлович Михайлова—Советски районри Мăн Ямашри ялпо председательне.
51. Мария Александровна Митронинăна—Чăвашторгăн Канашри отделенийĕн главнăй бухгалтер заместительне.
52. Ольга Ивановна Московкинăна—Чăвашторгăн Куславккари отделенийĕн столовăй заведующине.
53. Дмитрий Федорович Мукина—Чăвашпотребсоюзĕн Канашри ĕçмелли япаласем тăвакан предприятийĕн директорне.

(Малалли пулать.)

ВКП(б) Шупашкар хула Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене сӳтсе-яврĕ: «1945 çулта тăватă уйăх хушшинче партие илнин итогĕсем çинчен» тата «Республика 25 çул тултарнă май хулана юсаса илемлетесси çинчен Шупашкар хула комитечĕн XII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен».

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн инструкторски отделĕн заведующийĕ Шаронова юлташ доклад турĕ.

Иртнĕ тăватă уйăх хушшинче партие 201 çын илнĕ, çав шутран—парти членне 105 çын,. кандидата 96 çын. Чылай парторганизацисем юлашки вăхăтра партие илес ĕçе вайсăрлатнă. Пуçламĕш 112 парторганизацирен 43-шĕ тăватă уйăх хушшинче партие пĕр çын та илмен.

Хулари парторганизацисем тата партие рабочисене илес ĕçе вайсăрлатнă. Тăватă уйăх хушшинче партие илнĕ 201 çынтан 44-шĕ çеç рабочисем. Хулари парторганизаци комсомолецсене те партие сахал илнĕ. Хулара 4.253 комсомолец пур, анчах партие 64 комсомолеца çеç илнĕ. Пленум çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе чылай парторганизацисем начар ĕçленине палăртрĕ.

Шаронова юлташăн докладĕ тăрăх Полукаров, Добрынина, Соколова (Ялхуçалăх институчĕ), Тютиков (Военкомат), Ислюков (ВКП(б) горкомĕ) сăмах тухса каларĕç.

Иккĕмĕш ыйтупа ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ доклад турĕ. Прение 5 çын тухса каларĕç.

XIII-мĕш пленум XII-мĕш пленумăн решенийĕсене çителĕклĕ пурнăçласа пымаллине палăртрĕ. XII-мĕш пленум строй-материалсем хатĕрлеме тата хулана юсаса илемлетмелли ĕçе вăхăтра сарса яма хушнăччĕ. Хула Совечĕн исполкомĕ çав решенисене пурнăçа кĕртмен. Шыв станцийĕ тăвас ĕç чарăнса ларас патне çитнĕ, колхозник çуртне, кинотеатра питĕ ерипен юсаççĕ, Пионерсен çуртне юсас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, пристане лайăхлатас тĕлĕшпе те ĕçлеме чарăннă. Чăвашгражданстрой (управляющийĕ Ермолаева юлташ) хулана юсаса илемлетме палăртнă ĕçсене çителĕксĕр туса пырать.

Пленум хула Совет исполкомĕн председательне Аникин юлташа хулана юсаса илемлетес тĕлĕшпе XII-мĕш пленум палăртса хăварнă ĕçсене çине тăрса пурнăçлама хушса хăварчĕ. Пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсемпе пĕрле, хулана юсас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене пурнăçламашкăн хăйсен коллективĕсене мобилизацилеме хушса хăварчĕ.

Пленумра ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ, ЦК ВКП(б) çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Магвеев юлташ пулчĕç.



Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

ИШЛЕЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

14. «Правда» колхоз (председателĕ Н. С. Ефремов юлташ). Колхоз 221 гектар тĕштырăсене 5 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ вăрлăхпа тата машинăпа ретĕн-ретĕн акнă.

15. «Красноармеец» колхоз (председателĕ И. Журавлев юлташ). Колхоз 170 гектар тĕштырăсене 5 ĕç кунĕнче агротехника енчен лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ.

16. «МОПР» колхоз (председателĕ С. А. Артемьев юлташ). Колхоз 200 гектар тĕштырăсене 7 ĕç кунĕнче агротехника енчен лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ.

17. «Коммунист» колхоз (председателĕ К. Ф. Федоров юлташ). Колхоз 128 гектар тĕштырăсене 6 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ.

18. «Новая жизнь» колхоз (председателĕ М. В. Васильев юлташ). Колхоз 113 гектар тĕштырăсене 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ вăрлăхпа тата машинăпа ретĕн-ретĕн акнă.

19. «Верный путь» колхоз (председателĕ В. К. Волков юлташ). Колхоз 119 гектар тĕштырра 5 ĕç кунĕнче агротехника енчен лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ.

20. «Новое Марково» колхоз (председателĕ В. Е. Ефремов юлташ). Колхоз 147 гектар тĕштырăсене 4 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне яровизациленĕ вăрлăхпа тата ретĕн-ретĕн акнă.

ЧУРАЧĂК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

21. Шуркасси ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ильин юлташ). Колхоз 206,8 гектар тĕштырăсене агротехникăн пур мероприятийĕсене те пурнăçласа 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

Йĕпреç МТС-ĕ хăйĕн планне тултарнă

Йĕпреç МТС-ĕ çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 102,1 процент тултарнă.

МТС колхозсене пулăшать

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. МТС кăçалхи çуракинче юлса пыракан колхозсене пысăк пулăшу парать. Трактор бригадисем çураки ĕçне вăхăтра тытăнчĕç. Вĕсем çурхи вăхăтăн кашни сехечĕпе туллин усă кураççĕ. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, трактористсем çуракине кĕске срокра вĕçлеме тăрăшаççĕ.

Ăмăртура Падюков юлташ ертсе пыракан çамрăксен бригади малта пырать. Афондеркин юлташăн бригади те хăйĕн планне ăнăçлă пурнăçласа пырать.

Уйрăм трактористсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлесе, кулленхи ĕç нормине иртtерсе тултараççĕ. Комсомолецсем Михеевпа Шихранкина «У-2» тракторпа 3,4 гектар вырăнне 4,5 гектар таран сухаласа пыраççĕ. Анна Королева НАТИ тракторпа 7,2 гектар вырăнне 8-шар гектар ытла сухалать.

МТС пулăшнипе «Новая жизнь» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче тĕштырăсене акса пĕтерчĕç.

П. ТИХОНОВ.

Иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илсе

МУРКАШ. Иртнĕ çулта Крупская ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Алексеев юлташ) ялхуçалăх ĕçĕсенче кая юлса пынă. Кăçал колхоз, иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илсе, çуракине тимлĕн хатĕрленсе тухрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çуракине кĕске срокра тата лайăх иртtерессишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. М. Владимирова, А. Степанов сухаçăсем кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пычĕç, икĕ касăллă плугпа 1,0 гектар сухалас вырăнне 1,40—1,50 гектар сухаларĕç. Вĕсем çураки пуçланнăран вара 25—28 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Çавăн пекех акакансем В. Егоров, Н. Алексеев юлташсем те хăйсен нормине ытлашшипех тултараççĕ. Колхоз бригадирĕ О. Евдокимова юлташ ĕçкунĕсене ĕç кĕнеки çине вăхăтра çырса пырать, çакă вара колхозниксен ĕçлес хастарлăхне хăпартать.

Кунта колхозниксем хушшинче ăнлантару ĕçне те лайăх йĕркеленĕ. О. Евдокимова, Е. Федорова агитаторсем уйхирте ĕçлекенсем каннă вăхăтра тăтăшах калаçусем иртtереççĕ. Стена хаçачĕ вăхăтра тухать. Колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ хыççăн çĕрулми лартма тытăнчĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Юлса пыракан колхозсен васкамалла

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Малта пыракан колхозсем тĕштырăсене 8—10 кун хушшинче акса пĕтерчĕç. «Коминтерн», Чапаев ячĕпе тăракан, «Путь социализма», «Крестьянин», «Совет» колхозсем тĕштырăсене сеялкăсемпе тата лайăх акса хăварчĕç. Халĕ ку колхозсем çĕрулми тата техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем акмалли çĕре те сухаласа пĕтереççĕ.

Анчах та районра хăшпĕр колхозсем çăтма çук сӳрĕк ĕçлеççĕ. «Авангард» колхоз çураки планне пурĕ те 10 процент кăна пурнăçланă. Колхоз председателĕ Ярусов юлташ ответлăха туйса ĕçлемест. Ярусов юлташ та, бригадирсем те хирте сахал пулаççĕ. Ĕç дисциплини начар. Колхозниксем ĕçе 7—8 сехетре тин тухаççĕ, ĕçрен ирех таврăнаççĕ. Ĕç пахалăхĕшĕн те сахал тăрăшаççĕ. Ашăх сухаланине, алăпа акнине час-часах курма пулать.

Киров ячĕпе тăракан колхоз çураки планне 16 процент ытларах çеç пурнăçланă. Кунта сухаçăсемпе сӳреçĕсем, акакансем час-часах улшăнса тăраççĕ. Хирте опытсăр çамрăксем ĕçлеççĕ, çав хушărах опытлă колхозниксем килте лараççĕ.

Хăшпĕр колхозсенче туртăм вăйĕпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Хĕрӳллĕ ака вăхăтĕнче Чкалов ячĕпе тăракан колхозра 6 лашана ĕççĕр тăратнă. Киров ячĕпе тăракан колхозра ĕçе вĕрентнĕ вăкăрсемпе çуракинче усă курмаççĕ. Çак колхозсем кулленхи графика 40—50 процент таран çеç тултараççĕ. Юлса пыракан колхозсем çине ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн ытларах çаврăнса пăхмалла.

(Хамăр корр).

„Красная Горка“ колхозра васкамаççĕ

ИШЛЕЙ. Районри малта пыракан колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Кипечкасси ял Советĕнчи «Большевик», Сăпайкасси ял Советĕнчи «Труд», «Ыраш» колхозсем тĕштырă культурисене акса пĕтерчĕç. Анчах та Сĕньял-Покровски ял Советĕнчи «Красная Горка» колхоз çураки ĕçĕнче ытла та кая юлса пырать. Колхозăн пĕтĕмпе 52 гектар акса хăвармалла. Вăл шутран тĕштырă культурисем 39 гектар акмалла, паянхи кун тĕлне пĕтĕмпе те 23 гектар кăна сухаланă, 17,5 гектар кăна акнă.

Колхозра 5 лашапа сухалаççĕ. Сухаçăсем кулленхи нормăна тултараймаççĕ. Икĕ касăллă плугпа 0,75 гектар сухаламалла пулсан, вĕсем 0,65.—0,70 гектар кăна сухалаççĕ. Ку вăл ĕçе ир тухманнинчен тата каçхине час кĕнинчен килет. Çавăн пекех акас ĕç те вăрахăн пырать. Колхозăн пĕр сеялка пур, анчах та ăна юсаман.

Суха ĕçне сдельщинăпа организацилемен, сухаçăсемпе акакансем валли пĕрлешӳллĕ столовăй çук. Кăнтăрлахи вăхăтра лашасене 3,5—4 сехет кантараççĕ.

Кунта туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Колхозниксен хĕсĕр ĕнесемпе вăкăрсем пур, вĕсене кӳлме вĕрентмен. Уя тырă турттарма та суха ĕçĕнчи лашасемпех усă кураççĕ.

Массăллă-ăнлантарулла ĕçе кунта япăх туса пыраççĕ. Стена хаçачĕ тухмасть. Сухаçăсем хушшинче калаçусем иртtермеççĕ. Бригадир сухаçăсем патĕнче сайра пулать.

И. Г.

Ферма çумĕнчи участоксене акаççĕ

Чурачăк районĕнчи колхозсем кăçал ферма çумĕнчи участоксем валли 320 гектар уйăрнă. Чылай колхозсем çак участоксене акма тытăнчĕç. «Красная Бавария» колхоз 2 гектар, «Прогресс» колхоз 1,5 гектар çахăр кăшманĕ акнă.

ÇĔНТЕРӲПЕ ХАВХАЛАНСА

Вăрнар районĕнчи Уравăшри «1-ое Мая» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса тĕштырăсем акса пĕтерчĕç.

Кунта çуракине лайăх хатĕрленсе тухнă, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен йышăннă постановление кашни колхозника тĕплĕн ăнлантарса панă. Вăрлăх участокĕсенче ĕçлеме 4 звено организациленĕ. Кĕрхи тырă калчисене те ака вăхăтĕнчех апатлантарнă. Паха тислĕкпе апатлантарас шутпа, лаша витисен урайне сӳсе аялти тăпрапа пурĕ 64 гектар кĕрхи калчана апат панă. Бригадирсемпе колхозниксем фронтри пек ĕçлеççĕ. Ĕçе тĕттĕмле тытăнса каçхине сĕм тĕттĕм пулсан тин хиртен кĕреççĕ. Çураки вăхăтĕнче нормăна тултарман пĕр çын та çук. Кая юлса пынă 6-мĕш бригада (бригадирĕ Косарев) кă. çалхи çуракинче уйрăмăнах лайăх ĕçлет.

Сӳре сӳрекенсем виçĕ сӳрепе 6 гектар сӳрелес вырăнне: М. Николаева—9,30 гектар, Е. Васильева—7,8 гектар сӳрелеççĕ. Акакансем М. Орлов, Х. Павлов, Т. Сорокина 12 ретлĕ сеялкăпа 5 гектар вырăнне 6—6,5 гектар акаççĕ.

Вăрлăхсене яровизацилесе, тасатса акнă.

Колхоз республика 25 çул тултарнин юбилейĕ тĕлне çирĕп план тăрăх ĕçлесе пырать. Паянхи куна ял хушшипе çулсем çине 1.800 тĕп хăвăрт ӳсекен йывăç, 2 гектар çине çимĕç йывăççисем лартнă, кашни колхозник хăйĕн килне 5 тĕпрен кая мар çимĕç йывăççи лартнă, больница, шкул картишĕсене 50-шар тĕп лартнă.

Колхозра трактористсем те лайăх ĕçлеççĕ. Михайлов юлташ ертсе пыракан трактор бригади паха тĕслĕхсем кăтартать. Акă, тракторист И. Егоров, Михайлов юлташсем сменăри нормăна 1,5—2 хут иртtерсе тултараççĕ. Тракторсем çуракине тухнăран вара пĕр сехет те ахаль ларман.

А. ЯКИМОВА.

Колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Çĕрулми лартаççĕ

ÇĔРПӲ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем тĕштырăсемпе пĕр çул ӳсекен курăксене пĕтĕмпех акса пĕтерчĕç. Иртнĕ çул малта пынă «Емĕт» колхоз кăçал хăйпе кӳршĕллĕ «Пионер» колхозран юлса пырать. Кунта тĕштырăсене те акса пĕтермен.

Кăçалхи çуракинче пысăк ăнăçлăхпа ĕçленĕ «Балтиец» колхоз ĕнер 5 гектар çĕрулми лартнă. Çавăн пекех «Пионер» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче те çĕрулми лартмалли вырăнсене сухаласа хатĕрлеме тытăннă. Паян-ыран вĕсем çĕрулми лартма пуçăнаççĕ.

А. ИВАНОВ.

Ялти агитаци ĕçĕ

Октябрьски районри колхозсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе чылай аванлатрĕç. Районра пурĕ 25 агитколлектив ĕçлет. 67 колхозра стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ. «Красное Сормово», «Путь коммунизма» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче 7—8-шар номер стена хаçачĕ кăларнă. Кунсăр пуçне бригадăсенче боевой листоксем кăлараççĕ.

Туçари агитколлектив хăйĕн ĕçне лайăх йĕркелерĕ. Партин пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ В. Павлов юлташ) çамрăксене ĕçре вĕрентсе пырать. Агитаторсем колхозниксем хушшинче тĕнчери хару-тăру çинчен тата партипе правительство постановленийĕсене вуласа параççĕ. Час-часах докладсем, калаçусем тата вечерсем туса иртtереççĕ. Уйрăмăнах Чăнкассинчи, Хуракассинчи тата Караньялĕнчи пуçламĕш парторганизацисем лайăх ĕçлеççĕ.

Партин Кудемерти пуçламĕш организацийĕ çуракине вăхăтра та лайăх иртtерессишĕн социализмлă ăмăрту сарса ячĕ. Ăмăртура коммунист Маркова ертсе пыракан бригада малта пырать. Ĕç нормине кунта кашниех 120—150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ политикăллă-массăллă ĕçе куллен тĕрĕслесе тăрать. Ĕçри çитменлĕхсене асăрхаса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Райком пропагандисчĕсем Е. Тюмерова, А. Петрова юлташсем час-часах вырăна тухса пулăшу параççĕ.

Анчах, çитĕнӳсемпе пĕрлех, ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Утаçкасси, Чураш тата Аксарино ялĕсенче 3—4 уйăх хушши ĕнтĕ стена хаçачĕ тухмасть. Кунти коммунистсем вырăнти пичет ĕçне тивĕçлипе хакламаççĕ. Партин Кĕчкейри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ А. Кокшева юлташ) масса хушшинче ĕçлессине кирлĕ вырăна лартман. Вулав çурчĕн заведующийĕ коммунист М. Душкина колхозниксем хушшинче пачах ĕçлемест.

Н. АНДРЕЕВ. (Хамăр корр.).

Чугун çул валли çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана срокчен тултарар

А. МАТВЕЕВ
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

1944—45 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чугун çул валли вутă хатĕрлесе памалли плана орденлă Чăваш республики ăнăçлăн тултарчĕ. Пирĕн республикăри вăрман промышленность работникĕсен тата вăрман хатĕрлевне хутшăнпă колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне партипе правительство пысăка хурса хакларĕç. Чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе республика Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çакă вăл пире татах та лайăхрах ĕçлеме хушать. Вăрман хатĕрлекен предприяти директорĕсен, вăрман промышленность специалисчĕсен, район руководителĕсен 1945 çулхи II-мĕшпе III-мĕш кварталсенчи вăрман хатĕрлев планне тултарас тĕллевпе рабочисемпе колхозниксем хушшинчи организациллĕ, политикăллă, массăллă ĕçе вăйлатмалла, кашни вăрман пунктĕнче, бригадăра, колхозра социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Пирĕн задача—Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне малашне те хамăр алăрах хăварасси.

Çĕршыври тĕп топливо районĕсем, уйрăмах Донбасс, нимĕçсен аллине вăхăтлăха лекнĕ пирки, Оборонăн Государственнăй Комитечĕ чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе парас ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи питех те кирлĕ задача тесе хакларĕ. Пирĕн вăрман промышленность работникĕсемпе унта ĕçлеме мобилизациленĕ колхозниксем, çак задачăна тĕплĕн ăнланса ĕçлесе, чугун çул валли вутă хатĕрлесе памалли заданисене ăнăçлăн тултарса пычĕç. Вĕсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чугун çул транспортне—вутă, оборона промышленность предприятийĕсене—спецсортиментсем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. 1942 çулхи мартăн 1-мĕшĕпе 1945 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ хушшинче (37 уйăх хушшинче) республикăри вăрман хатĕрлекен организацисем чугун çул валли темиçе миллион кубометр вутă хатĕрлесе панă. Хусан чугун çулĕ топливăран татăк пулнине курмарĕ. Çар эшелонĕсем фронт еннелле пĕр чăрмавсăр куçса тăчĕç.

Пирĕн республика чугун çул транспортне 1944—45 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе уйрăмах лайăх ĕçлерĕ. Республика сезонри плана хатĕрлес енĕпе 100 процент, турттарас енĕпе—102,4 процент тултарчĕ. Республикăна çавăншăн Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 250 пин тенкĕ преми памалла тунă.

Республикăри районсенчен чугун çул валли вутă хатĕрлесе тата турттарса парас тĕлĕшпе Куславкка (райсовет исполкомĕн председателĕ Прытченков юлташ, парти райкомĕн секретарĕ Крючков юлташ), Сĕнтĕрвăрри (райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ, парти райкомĕн секретарĕ Вахнин юлташ), Первомайски (райсовет исполкомĕн председателĕ Васильков юлташ, парти райкомĕн секретарĕ Долгов юлташ), Шупашкар (райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташ, парти райкомĕн секретарĕ Караушев юлташ) тата Чурачăк (райсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ, парти райкомĕн секретарĕ Артемьев юлташ) районĕсем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен планĕсене срокчен, Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле, пурнăçларĕç. Йĕпреç, Калинино, Комсомольски, Муркаш, Советски, Вăрмар, Чкаловски, Шăхасан, Çĕмĕрле тата ытти районсем те плана ирттерсе тултарчĕç.

Чугун çул валли вутă хатĕрлесе тата турттарса парас тĕлĕшпе ĕçленĕ республикăри 28 районран 18-шĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтри плана тултарнă, 10-шĕ вара тултарман. Уйрăмах Кувакино, Сĕрпӳ, Октябрьски, Элĕк тата Сĕнтĕр районĕсем начар ĕçлерĕç. Çак районсен руководителĕсем, чугун çул валли вутă хатĕрлесе парас ĕç мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнланмасăр, вăрманта ĕçлеме мобилизациленĕ колхозниксене ĕçе пĕтĕмпех кăлармарĕç тата вĕсене тăтăшах ĕçлеттерме тăрăшмарĕç.

1944—45 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана малта пыракан предприятисемпе районсем ăнăçлăн тултарни — вĕсем вăрманта ĕçлеме тивĕçлĕ ĕç вăйне вăхăтра тата лайăх мобилизациленинчен, вĕсене плана тултаричченех ĕçре çирĕплетсе хăварнинчен тата вĕсемпе ĕçре тĕрĕс те йĕркеллĕ усă курнинчен, ĕçлеме кирлĕ условисем туса панинчен килнĕ.

Çакна кирлĕ пек туса пыман Элĕк, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ тата ытти районсенче ĕç пачах та урăхла пулчĕ. Вĕсем ĕç вăйне сезон пĕтиччен çирĕплетсе хăвармарĕç, çавăнпа унтан мобилизациленĕ колхозниксем пĕрмаях улшăнса тăчĕç. Ĕç вăйне мобилизацилессине тĕрĕс мар ирттернĕ пирки тата вăрманта ĕçлекен рабочисене çирĕплетсе хăварман пирки, çак районсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе памалли плана тултармарĕç.

Вăрман хатĕрлекен промышленноçăн ĕçри ăнăçлăхне вăрман ĕçĕнчи çĕршер стахановецсем, колхоз, ял Совет председателĕсем, партипе совет организацийĕсен руководителĕсем тата вăрман хатĕрлекен предприятисен работникĕсем вăхăта пĕлмесĕр, вăя шеллемесĕр ĕçленипе татса пачĕç. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче вăрман хатĕрлекен организацисенче ĕçлекен рабочисенчен, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксенчен пурĕ 15 çынна Совет правительстви орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Вăл шутран Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ пĕр çынна, «Хисеп палли» орденĕ—икĕ çынна, «Ĕçри паттăрлăхшăн» медаль — 7 çынна тата «Ĕçре палăрнăшăн» медаль 5 çынна панă. Унсăр пуçне 57 çынна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине панă.

Вăрман хатĕрлекен организацисенчи чугун çул валли вутă хатĕрлесе тата турттарса парас тĕлĕшпе республикăри вăрмансене сыхлакан Управлени предприятийĕсем ыттисенчен лайăхрах ĕçленĕ Вĕсем плана хатĕрлес енĕпе 104 процент, турттарас енĕпе 111 процент тултарнă. Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем вутта плана пăхнă чухлех каснă, анчах планран 2.3 процент чухлĕ сахалтарах турттарнă.

Уйрăмах Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ (директорĕ Матвеев юлташ) лайăх ĕçленине палăртмалла. Çак вăрман хуçалăхĕн работникĕсем, Муркашпа Советски районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем пулăшнипе, ВЦСПС-па СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесоохранăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне икĕ хут илме тивĕçлĕ пулчĕç. 1944 çулхи IV-мĕш кварталти ĕçсемшĕн пĕрремĕш хут ялав панă чух вĕсене иккĕмĕш преми—50.000 тенкĕ, 1945 çулхи пĕрремĕш кварталти ĕçсемшĕн иккĕмĕш хут ялав илнĕ чух пĕрремĕш преми—75.000 тенкĕ пачĕç.

Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн системинче кĕрекен вăрман хатĕрлекен 8 предприятирен иртнĕ сезонра чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана 5 предприяти кăна тултарчĕç, Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ (начальникĕ Клячкин юлташ), Буинск вăрманпромхозĕ (директорĕ Васильев юлташ) тата Йĕпреç вăрманпромхозĕ (директорĕ Федоров юлташ) çителĕксĕр ĕçлерĕç, вутă хатĕрлес тĕлĕшпе хăйсене панă плана тултараймарĕç. Асăннă предприятисем плана тултарманнине унти руководительсем ĕçе япăх ертсе пынипе кăна ăнлантарса памалла.

Вăрман ĕçĕнче чăн-чăн паттăрлăх кăтартакан стахановецсем ӳсрĕç. Сăмахран, Алтышевăри вăрманпромхозра вутă турттарас тĕлĕшпе пĕрмаях ĕçлекен стахановец Сергей Федорович Егоров юлташ вăрçă çулĕсенче пурĕ 12.000 кубометр вутă турттарса кăларнă. Вăл иртнĕ сезонра кăна 800 кубометр вырăнне 2.550 кубометр турттарса кăларса, задание 319 процент тултарнă.

Тăвай районĕнчи «Заря» колхоз членĕ Николай Тарасович Тарасов, Буинск вăрманпромхозĕнче ĕçлекенскер, лучковăй пăчкăпа тухăçлă ĕçлеме вĕреннĕ. Вăл иртнĕ сезонра кулленхи нормăна вăтам шутпа икĕ хут ирттерсе тултарса пынă, уйрăм кунсенче хăйĕн нормине 1.400 процент таран тултарнă. Çапла вăл сезонра 110 норма тултарас вырăнне 233 норма тултарнă. Çав вăхăтрах Тарасов юлташ лучковăй пăчкăпа ĕçлеме ытти рабочисене те вĕрентнĕ, вĕсене хăйĕн стахановла ĕç опычĕпе паллаштарнă, вĕсен ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшнă. Лучковăй пăчкăпа вăрман касакан Геннадий Яковлевич Героев та, Октябрьски районри «Комбайн» колхозран мобилизациленĕскер, сезонра 110 норма вырăнне 264 норма тултарнă. Хăшпĕр кунсенче вăл хăйĕн нормине 9 хут та ирттерсе тултарнă. Вăрнар районĕнчи Эльмен Сунар ялĕнчен пынă Наталья Егоровна Егорова, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, сезонри задание 124 процент тултарнă, 250 кубометр вырăнне 311 кубометр вутă хатĕрленĕ. Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи паллă стахановец Люциан Иосифович Барилло. иртнĕ сезонра 577 кубометр вутă хатĕрлесе, задание 147 процент тултарнă. Йĕпреç районĕнчи Климово ялĕнчен мобилизациленĕ Варвара Ивановна Иванова та Йĕпреç вăрманпромхозĕнче 387 кубометр вутă хатĕрленĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе панă задание ăнăçлăн тултарма колхозсен, ял Совечĕсен председателĕсем тата районри организацисен руководителĕсем нумай пулăшнă. Акă, сăмахран, Муркаш районĕнчи Чуманкасси ял Совет председателĕ Никитин юлташ вăрман хатĕрлес ĕçе лайăх организацилесе ертсе пынă. Унăн ял Советне кĕрекен колхозсем, 4.200 кубометр вутă турттарас вырăнне 4.293 кубометр турттарса, плана 102 процент тултарнă. Тихонов юлташ председатель пулса ертсе пыракан «Гвардеец» колхоз та (Шăхасан районĕ) планпа пăхниччен икĕ хут ытларах вутă турттарса панă. Комсомольски районри Красин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Анчурин юлташ) вутă турттармалли плана виçĕ хут ирттерсе тултарнă Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ А. Васильев юлташ) сезонра задание касас енĕпе 208 процент, турттарас енĕпе 271 процент пурнăçланă.

Вăрман хатĕрлекенсемпе турттаракансем çакăн пек тухăçлăн ĕçлени вĕсем Тăван çĕршыва, партипе правительствăна тата аслă Сталина чĕререн юратнинчен. Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăма тăрăшнинчен килнĕ.

Анчах та иртнĕ сезонра вăрман ĕçĕнче çитĕнӳсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те пулчĕç. Çав çитменлĕхсенчен пĕри вăл—плана хăшпĕр ассортиментсем тăрăх тултарманни пулать. Вутă турттармалли плана 91,2 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех юманран экстракт вутти сахал хатĕрленĕ, çак ĕçĕн планне 43,5 процент кăна тултарнă.

Республикăри вăрмансене сыхлакан Управленин вăрман хуçалăхĕсем иртнĕ сезонри плана касас енĕпе—152,3 процент, турттарас енĕпе—108,1 процент тултарнă пулсан, Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем плана касас енĕпе—97,9 процент, турттарас енĕпе 87 процент çеç тултарчĕç.

Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Кире, Улатăр вăрманпромхозĕсемпе механизациленĕ вăрман пункчĕсем юлса пыни ĕçе тĕрĕс йĕркелеменнинчен, рабочисене кирлĕ условисем туса паманнинчен, ĕç хатĕрĕсемпе, уйрăмах лучковăй пăчкăпа, япăх усă курнинчен килет. Çавна пула кунта вăрман касакансем нормăна вăтамран 60—65 процент, турттаракансем—70—75 процент çеç тултараççĕ.

Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсен ĕçĕнчи тепĕр çитменлĕх вăл—хăйсен вăйĕсемпе япăх усă курни пулать. Республика хăйĕн мобилизациленĕ вăйĕсемпе иртнĕ сезонра вăрман хатĕрлемелли плана касас енĕпе 109,1 процент, турттарас енĕпе 95,9 процент тултарчĕ пулсан, Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем вара хăйсен вăйĕсемпе плана касас енĕпе 61,7 процент, турттарас енĕпе 60,6 процент кăна тултарчĕç. Уйрăмах механизациленĕ çулсем начар ĕçлерĕç, вĕсем вутă турттармалли плана çурри чухлĕ те тултараймарĕç.

Вăрман хатĕрлекен предприятисем хăйсен майĕсемпе, уйрăмах механизациленĕ паркпа, çителĕксĕр усă курни хăшпĕр вăрманпромхозсемпе механизациленĕ вăрман пункчĕсен руководителĕсем çак ĕç çине ответсăррăн пăхнинчен, Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн руководителĕсем çакна çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнинчен килнĕ. Хăйсен ĕçри майĕсемпе усă курас тĕлĕшпе уйрăмах Йĕпреçпе Улатăр вăрманпромхозĕсем, Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ начар ĕçлеççĕ.

Тепĕр çитменлĕх вăл—вăрман хатĕрлекен организацисене районсем ĕç вăйĕ вăхăтра памании, ăна задание тултариччченех производствăра çирĕплетсе хăварманни пулса тăрать.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ 1945 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн республикăн çуллахи вăхăтра вутă, шпал материалĕсем тата шахтăсене çирĕплетмелли материалсем чылай хатĕрлемелле. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн çак заданине вăхăтра тата ăнăçлăн пурнăçлас тĕлĕшпе вăрман хатĕрлекен предприятисемпе район руководителĕсен чылай ĕçсем тумалла. Касма уйăрнă вăрман фончĕсене хăвăрт пăхса тухас пулать, вĕсене çуллахи вăхăтра турттарса тухма çывăхрах вырăнсенче уйăрса памалла. Йывăç турттарнă çĕрте рационализациленĕ тата лайăхлатнă çулсемпе май пур таран усă курмалла, çапла майпа чĕрĕ туртăм вăйĕпе сахалрах ĕçленипех плана тултарма тăрăшмалла.

Вăрман касакансемпе турттаракансене хăвăртрах мобилизацилесе ĕçе ямалла. Вĕсене кашни район Чăваш АССР Совнаркомĕн 1945 çулхи майăн 10-мĕшĕнче йышăннă постановленире кăтартнă чухлĕ яма тивĕçлĕ. Унсăр пуçне вăрманта ĕçлекен çынсемпе лашасене çирĕплетнĕ задание тултариччченех пĕр улшăнмасăр ĕçлеттермелле. Вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсен рабочисене ĕçлеме условисем туса памалла, вĕсен ĕçне лайăхрах организацилесе, ĕç тухăçне ӳстерме пулăшмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ районсемпе вăрман хатĕрлекен организацисене вутă, шпал тата шахтăсене çирĕплетмелли материалсем хатĕрлес тĕлĕшпе панă плансене тырпула пухса кĕртме тытăниччен тултарма хушать. Çапла майпа уйхирте ĕçлеме кирлĕ ĕç вăйне вăрман ĕçĕнчен хăтармалла. Район руководителĕсен, çавăн пекех колхоз председателĕсен те вăрман хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе мĕнмĕн тумаллине халех палăртса хумалла.

Аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕпе унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ, союзниксемпе пĕрле кĕрешсе, гитлерла Германие вăрçăра парăнтарчĕç. «Европăри вăрçă тапхăрĕ пĕтрĕ. Мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ». Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсем, ытти мĕнпур ĕççыннисем пекех, малашне татах та тимлĕнрех ĕçлесе, Тăван çĕршыва тĕреклетме пулăшĕç.

Совет Союзĕн Лондонри посольствинче Германие çĕнтернĕ ятпа пулса иртнĕ йышăну

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС) Ĕнер Совет Союзĕн Англири посолĕ Ф. Т. Гусев юлташ Германие çĕнтернĕ ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура çаксем пулнă: Голландин премьер-министрĕ. Норвеги премьер-министрĕ, Англин финанс министрĕ Андерсон, çар производствин министрĕ Литтлтон, лорд-канцлер Саймон, авиаци министрĕ Синклер, тинĕс министрĕ Александер, авиаци промышленноçĕн министрĕ Криппс тата Англи правительствин ытти членĕсем, Клементина Черчилль госпожа, дипломати корпусĕн членĕсем, Британин юлташла пурăнакан çĕршывĕсен чрезвычайнăй уполномоченнăйĕсем, союзлă çĕршывсен правительствисен членĕсем тата дипломати представителĕсем. Англири лордсен палатин тата общинăсен палатин членĕсем, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин сотрудникĕсем, çар министерствин, авиаци министерствин аслă офицерĕсем. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕсем пулнă. Унсăр пуçне, йышăнура ученăйсем, артистсем, ĕçлĕ ушкăнсемпе профессиллĕ ушкăнсен представителĕсем тата Советсен Лондонри колонийĕн членĕсем пулнă.

Пресс-конференцире Трумэн калани

ВАШИНГТОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен вăрçăри сиене саплаттармалли Комиссийĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Паули тата унăн помощникĕ пулса Любин ĕçлемелле. Пресс-конференцире Трумэн çав çынсемпе пĕрле Мускава каякансен хушамачĕсене каласа панă.

Корреспондентсенчен пĕри Трумэна çакăн çинчен астутарнă: пĕрремĕш пресс-конференцире Эсир Джонсон законĕ пирки (çав закон Пĕрлешӳллĕ Штатсене пĕтĕм тĕнчери вăрçă хыççăн юлнă парăмсене тӳлесе татман çĕршывсене кивçен укçа пама чарать) эпĕ хамăн шухăша каярахпа каласа парăп тенĕччĕ, тенĕ. Трумэн çапла ответленĕ: эпĕ Джонсон законне пăрахăçа кăларасшăн, ăна эпĕ нихăçан та ырламан, тенĕ. Унтан вăл Рузвельтăн январь уйăхĕнче конгреса бюджет пирки янă посланийĕн хăшпĕр вырăнĕсене, çав закона пăрахăçа кăларма кирли çинчен калакан вырăнĕсене вуласа панă Вара çапла каланă: эпĕ Рузвельт шухăшĕпе пĕтĕмпех килĕшетĕп. тенĕ.

Вăрçăри сиене саплаттармалли комиссии çинчен Трумэн çапла каланă: «Çав сиене саплаттарас ыйтăва тĕрĕс те çине тăрса татса пани вăрçă хыççăнхи пурнăçăн хăшпĕр чи пысăк ыйтăвĕсене кăларса тăратать. Çав ыйтусем вĕсем вăраха пыракан мир тăвассине таччăн çыхăнса тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем çине тĕрĕс ответ пани Америкăпа пĕтĕм тĕнче хăрушсăрлăхĕшĕн питĕ кирлĕ. Эпĕ хамăрăн тĕллевсем пирки пирĕн Паули посолпа Любин доктор шухăшланă пекех шухăшлатăп. Чи малтан, Германипе Япони урăх нихăçан та хĕçпăшалланма пултараймĕç тесе шанса тăма май пулмалла, çакă вăл пирĕншĕн пуринчен те ытларах кирлĕ. Эпĕ çапла шутлатăп: çак ыйту пирки пирĕн союзниксем те пирĕн пекех шухăшлаççĕ, çакна пула вăрçăра кӳнĕ сиене Германие япалапа тӳлесе саплаттармалли тĕрĕс те çителĕклĕ программăна туса хума çул уçăлĕ, япалапа тӳлени вара Германи оккупацилесе тăнă çĕршывсене ытларах юсаса ура çине тăратма пулăшмалла. Çав пысăк ĕçе тума суйласа лартнă çынсене пур американецсем те шанса тăмалла пултăр. Çав çынсем çак задачăна пурнăçлама юрăхлă».

Германин генеральнăй штабне мĕнле тыткаламалли çинчен Пĕрлешӳллĕ Штатсем шухăшласа хунă-и? тесе ыйтсан, Трумэн çапла ответленĕ: çак ыйтăва халĕ те татса паман-ха, тенĕ. Вăрçă преступникĕсем çинчен ыйтсан, Трумэн çапла каланă: çак ĕçе хальхи вăхăтра Верховнăй судăн членне Джексона хушнă, тенĕ.

Нумаях пулмасть США-н çар информаци бюровĕн руководителĕ Дэвис çапла каланăччĕ: Германин американецсем оккупациленĕ пайне тĕрлĕ кĕнекесем илсе пырассине чылай чакарĕç, тенĕччĕ. Трумэн çавăн пек каланине халь улăштарни çинчен пĕлтернĕ. Трумэн çапла каланă Дэвис çак ыйтупа верховнăй главнокомандующие Эйзенхауэра пăхăнса тăракан çынсемпе калаçса татăлнă тесе шутласа каланă. Анчах каярахпа Эйзенхауэр мана хăй çавăн пек политикăпа килĕшменни çинчен пĕлтерчĕ. «Эйзенхауэр генерал мана çапла пĕлтерчĕ,—тенĕ малалла Трумэн,—Германие тĕрлĕ кĕнекесем турттарса килес тĕлĕшпе эпĕ нимĕнле распоряжени те, нимĕнле приказ та паман, терĕ. Эйзенхауэр вара çав ыйту пирки хăйĕн шухăшне каласа пачĕ. Вăл çапла шухăшлать: Германире кĕнекесемпе хаçатсем ирĕклĕн кăларса тăрассине тата Германие тĕрлĕ пĕлтерӳсемпе шухăшсем ирĕклĕн пырса тăрассине вăрçă хăрушсăрлăхĕ май панă таран çеç пурнăçламалла. Çапах та Эйзенхауэр çакна палăртрĕ: Германире нацистсем çынсене хăйсем майлă çавăрма пултарассине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкиччен унта нимĕçсене кĕнекесемпе хаçат-журналсем ирĕклĕн кăларса тăма май пама юрамасть, терĕ. Раса теорине, пангерманизм шухăшĕсене саракан çынсене—нацистсене—çавăн пек тума май парса мире сухатасшăн мар эпир. Нацистсем, Гитлер тунă пек, демократиллĕ правăсемпе усă курса, демократие тапăнма ан пултарччăр. Эпĕ Эйзенхауэрпа килĕшетĕп».

США-ри ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПАЛАТИН БЮДЖЕТ КОМИССИЙĔ ЙЫШĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, представительсен палатин бюджет комиссийĕ ытти государствăсемпе, тариф тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне уступкăсем туса, суту-илӳ килĕшĕвĕсем тăвасси çинчен калакан закона тата виçĕ çуллăха тăсма йышăннă. Çав законшăн 14 çын, ăна хирĕç 11 çын сасăланă. Çак ыйтăва представительсен палати çитес эрнере пăхса тухать пуль, теççĕ.

ЯПОНИН ГЕРМАНИПЕ ТАТА ЕВРОПĂРИ ЫТТИ ÇĔРШЫВСЕМПЕ ТУНĂ ДОГОВОРĔСЕНЕ ЯПОНИ КАБИНЕЧĔ ПĂРАХĂÇА КĂЛАРМА ЙЫШĂННА

ТОКИО, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви каланă тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ паян çакăн пек пĕлтернĕ:

«Германи пĕр сăмахсăрах парăннă пирки тата Европăра нумаях пулмасть ытти событисем те пулса иртнĕ пирки, Японипе Германи тата Итали 1941 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче тунă вăрçă союзĕ, унтан виçĕ держава пакчĕ (çав çĕршывсемех 1940 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче тунăскер) тата Япони Германипе тата Европăри ытти çĕршывсемпе хăйне уйрăм йĕркепе çыхăнса ĕçлесси çинчен калакан ытти килĕшӳсем те пăрахăçа тухрĕç».

Çав договорсемпе килĕшӳсем пăрахăçа тухни çинчен пĕлтерме йышăннине майăн 15-мĕшĕнче министрсен кабинечĕн ларăвĕ, çав ыйтупа ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того тĕплĕ доклад туса панă хыççăн, ырланă. Вара Того императора кабинет йышăннă решени çинчен пĕлтернĕ. Унтан Того Германи посолне Штамера хăй патне чĕнсе илнĕ те ăна Европăра пулса иртнĕ юлашки событисем пирки Япони правительстви çавăн пек решени йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

БЕЛЬГИ КОРОЛĔ ЛЕОПОЛЬД ХĂЙ БЕЛЬГИЕ ТАВРĂНМА ШУТЛАМАННИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломати обозревателĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бельги королĕ Леопольд чирлĕ пирки Бельгие таврăнма шутламанни çинчен пĕлтернĕ. Бельгие нимĕçсем йышăнсан, Леопольд короле гитлеровецсем Австрие илсе кайнă пулнă. Австрие союзниксем ирĕке кăларнă хыççăн, Леопольд король Зальцбург хулине килнĕ. Халĕ Лоепольд король хăйĕн тăван шăллĕне Шарль принца регент ĕçĕсене туса пыма хушнă. Малалла обозреватель çапла çырать: Бельги влаçĕсем король чăннипех чирлĕ, унăн чирĕ дипломати тĕлĕшĕпе пулнă чир. мар тесе официальнăй йĕркепе пĕлтерне пулин те, анчах çакă паллă, король Брюссель хулине таврăнас пулсан, Бельгире монархи пирки пысăк дискусси пуçланса кайнă пулĕччĕ, вара ахаль те политикăллă йывăр обстановкăра çĕршыв вăйĕсем темиçе пая пайланнă пулĕччĕç.

Рейтер агентствин Брюссель хулинчи корреспонденчĕ майăн 4-мĕшĕнчех çапла пĕлтернĕччĕ: Бельгири социалистсен партийĕн исполкомĕ çакăн пек решени йышăннă: çĕршыв интересĕсем, унăн шухăш-кăмăлĕн пĕрлĕхĕ тата хальхи политика йĕркин çирĕплĕхĕ социалистсен партине влаçа короле парассине хирĕç тăма хушаççĕ, çавăнпа та социалистсен партийĕн короле хăйĕн престольне йышăнмалла мар тăвас ĕççене вăйлатса пымалла. Социалистсен партийĕн çав решенине ăнлантарса панă май, корреспондент çакна кăтартса панă: Бельгири социалистсем тата ку ыйту тĕлĕшпе вĕсемпе пĕр майлах шухăшлакан коммунистсем Бельгире хăйсем майлисене нумай тупĕç. Бельгири католиксен партийĕ, хăйсен хаçачĕ «Насьон Бельж» çырнă тăрăх, король Бельгие таврăнтăр та влаçа çĕнĕрен хăй аллине илтĕр, тесе шутлать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ЛЕЕ ТАТА ШВАРЦА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: союзниксем гитлеровецсен «Ĕç фрончĕ» текен организацине ертсе пынă Роберт Лее тата Гитлер партийĕн главнăй казначейне Франц Шварца ярса тытнă. Вĕсене американецсен 7-мĕш армийĕн чăсĕсем майăн 16-мĕшĕнче тыткăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛĔ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ДЕНИЦ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, майăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 16-мĕшĕнче каçхине союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕнче çапла пĕлтернĕ: Дениц адмирал тата Германин ытти офицерĕсем те апатсăмĕç тăратас тĕлĕшпе, нимĕçсен çарне хĕçпăшалсăрлантарас тĕлĕшпе тата медицина енĕпе пулăшса тăрас тĕлĕшпе вăхăтлăха ĕçлесе тăраççĕ. Германин çав офицерĕсем ĕçлесе тăнипе союзниксем пĕтĕмĕшпех пăхса асăрхаса тăраççĕ. Нимĕçсен çав офицерĕсем союзниксен командующийĕсем мĕн кăтартса панине çирĕппĕн пăхăнса пурнăçа кĕртсе пымалла.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ТАТА ТЕПĔР ВИЛĔМ ЛАГЕРЬНЕ ТУПНĂ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германин генеральнăй штабĕн начальникĕ Йодль генерал Германи парăнасси çинчен калакан малтанхи акта алă пуснă хыççăн «Германи халăхне шеллесе çемçерех тыткалама» ыйтнă пулнă. Шăп çав кун ĕнтĕ американецсен утлă çар чаçĕ тата тепĕр çĕнĕ концентрациллĕ лагерь тупнă. Ку лагерь Бухенвальдри лагерьтен те нумай хăрушăрах. Ку лагерь Эбензее ялĕ çывăхĕнче, çӳллĕ Альп тăвĕсем çинчи сулхăнлă улăхри Гмунденер ятлă кӳллĕн кăнтăр кĕтессине юнашар ларать. Çавăнта ĕнтĕ, Австри çĕрĕнчи питĕ илемлĕ вырăнта, ăсран тухнă, вычăпа вилес патне çитнĕ 16 пин çынна тупнă. Союзниксем çитиччен пĕр уйăх маларах лагерьте 28 пин çын пулнă, анчах та тăватă эрне хушшинче 12 пин çын пĕтнĕ. Вĕсем нумайĕшĕ вычăхса вилнĕ, нумайĕшне çакса вĕлернĕ, персе пăрахнă е хĕнесе вĕлернĕ.

Американецсем хăвăрт çывхарса пынине пĕлсен, лагерьте асапланса пурăннă халăх лагерь хуралне тапăннă та вĕлерсе пĕтернĕ. Унтан лагерьти пĕтĕм халăх лагерь начальникĕ полковник пурăнакан çурт патне кайнă. Полковника хваттерĕнчен туртса кăларнă та крематори патне сĕтĕрсе кайнă. Кунта пĕтĕм халăх пĕр рет ларса кайнă кăмакасем умне пырса тăнă. Тыткăнра асапланса пурăннă çынсем пĕр кăмакин алăкне уçнă та çав полковника çавăнта чиксе хупса лартнă.

Халĕ лагерь пырса кĕнĕ çĕрте пысăк вывеска çакăнса тăрать. Вывеска çине çапла çырса хунă: «Кунта—нацистсен цивилизацийĕн памятникĕ тата нимĕçсен тискер ĕçĕсен тивĕçлĕ кăтартăвĕ». Вывеска çине çавăн пек çырса хума Америка генералĕ Паттон хушнă.

ЮГОСЛАВИ ÇАРĔН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

БЕЛГРАД, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави çарĕн генеральнăй штабĕ майăн 15-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Драва шывĕн тури тăрăхĕ еннелле вирлĕн куçса пырса, Югослави çарĕсем нимĕçсен, усташсен, четниксен чаçĕсен юлашкийĕсен каялла чакмалли çулĕсене пурне те татнă, вĕсене Словеноградец, Дравоград, Марибор хулисем районĕнче çавăрса илнĕ, вара виçĕ кун хушши хаярран çапăçса аркатса тăкнă хыççăн вĕсене пурне те парăнтарнă. Çапла вара, тăшманăн Югослави çарĕсене хирĕç тăнă юлашки вăйĕсене çак районра пĕтерсе тăкнă. 20.000 усташа ытла тыткăна илнĕ. Вĕсем хушшинче вăрçă преступникĕсем нумай. Четниксене те нумай тытса илнĕ. Югослави çарĕсене çавăн пекех тата нимĕç çарĕсен Балканри ушкăнĕн юлашкисем ирĕксĕрех парăннă. Нимĕç çарĕсен ку ушкăнне Лэр генерал-фельдмаршал командир пулса ертсе пынă. 10.000 нимĕçе ытла тыткăна илнĕ. Çапăçусенче тăшманăн 5.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Усташ бандисем ирĕксĕр хăваласа кайнă гражданла çынсене 8.000 çынна яхăн ирĕке кăларнă. Хĕçпăшал тата çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

—o—

Çывăхри вăхăтра вуламалли лекцисемпе докладсен тата калаçусен

ТЕМИСЕМ

1. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ Германи империализмне çаплăн çĕнтерни.
2. Ленин—Сталин партийĕ 1941—1945 çулхи Отечественнăй вăрçăра совет халăхĕн çĕнтерĕвне хавхалантараканĕ тата организациленĕ пулнă.
3. Фашистла Германие пуçĕпех аркатса тăкни—пирĕн халăх этемлĕх историйĕ умĕнче тунă калама çук чаплă ĕç.
4. Славян халăхĕсем нимĕç захватчикĕсемпе нимĕç тиранине хирĕç ĕмĕр пынă кĕрешӳре вĕсене çĕнтерни.
5. Совет Союзĕ—халăхсен ирĕклĕхĕпе мирлĕ пурнăçĕн хăватлă тĕрекĕ.
6. Совет Союзĕ хăватли тата ăна никам та çĕнтерейрес çукки мĕнрен килет.
7. Хамăр Тăван çĕршывăн вăрçăпа экономика хăватне малалла çирĕплетсе пырас ĕçре совет халăхĕ умĕнче тăракан задачăсем.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—37, промышленность пайĕн — [illegible]—99, ялхуçалăх пайĕн — [illegible] издательство конторин 0—23.

НТ 00594. Типографи [illegible] СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 15.000